27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАРТ
31
ЭРНЕКУН
64(6559) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй соединенисемпе пехота ӑста маневр тунӑ хыҫҫӑн, КОЛОМЫЯ хулипе пысӑк чугун ҫул узелне — нимӗҫсен КАРПАТ тӑвӗсем умӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне—туртса илнӗ.

КОЛОМЫЯ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КАТУКОВӐН тата ЗАМИРОВСКИЙ генерал-майорӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ДРЕМОВӐН, ГОРЕЛОВ полковникӑн, БОЧКОВСКИЙ капитанӑн танкисчӗсем тата ХАРЧЕВИН полковникӑн саперӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, КОЛОМЫЯ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «КОЛОМЫЙСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 29-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ. ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, КОЛОМЫЯ хулине туртса илнӗ УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, КОЛОМЫЯ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 29-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, наступление вӑйлатса пырса, ПРУТ шывӗ урлӑ каҫнӑ та Украинӑри областьхулине — ЧЕРНОВИЦЫНЕ — Ҫурҫӗр Буковинӑн хуҫалӑхпа политика тӗлӗшӗнчи паха центрне, нимӗҫсен оборонин ПРУТ шывӗ ҫинчи питех те вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ пулнӑскерне, туртса илнӗ. Вӑл Венгрипе Румыни чиккисем патне пымалли вырӑнсене хупӑрласа тӑнӑ пулнӑ.

ЧЕРНОВИЦЫ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КАТУКОВӐН, ЗАМЕРЦЕВ генерал-майорӑн, ПРОХОРОВ генерал-майорӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ГЕТМАНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ДРЕМОВӐН, МОРГУНОВ полковникӑн, КОШЕЛЕВ подполковникӑн, ГУСАНОВСКИЙ подполковникӑн, БОЙКО подполковникӑн, КОЧУРА подполковникӑн танкисчӗсем, ВИШНЕВСКИЙ полковникпа КАМЕНСКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем, инженернӑй ҫарсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВӐН, ХАРЧЕВИН полковникӑн саперӗсем тата авиаци генерал-майорӗн ЛАКЕЕВӐН, НЕЧИПОРЕНКО полковникӑн, ФЕДУЛЬЕВ полковникӑн летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ЧЕРНОВИЦЫ хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте чапа тухнӑ соединенисемпе чӑҫсене «ЧЕРНОВИЦКИСЕМ» тесе ят, пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 30-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, ЧЕРНОВИЦЫ хулине ирӗке кӑларнӑ УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, ЧЕРНОВИЦЫ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 30-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 29-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй соединенисемпе пехота ӑста маневр тунӑ хыҫҫӑн, КОЛОМЫЯ хулипе пысӑк чугун ҫул узелне —нимӗҫсен КАРПАТ тӑвӗсем умӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне—туртса илнӗ. КОЛОМЫЯ хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем, малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх, ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: пӗтӗмӗшпех юсавлӑ «Тигр» йышши танксем — 13, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ чугун ҫул эшелонӗсем — 15, паровозсем — 45, тӗрлӗ складсем — 10, автомашинӑсем — 450 тата ытти ҫар пурлӑхӗ те нумай.

Мартӑн 26-мӗшӗнче УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Каменец-Подольск облаҫӗнчи СОЛОБКОВЦЫ, СТАРАЯ УШИЦА район центрӗсене туртса илнӗ. Фронт ҫарӗсем ПРУТ шывӗ урлӑ каҫнӑ та ЧЕРНОВИЦЫ хули патне ҫитсе тухнӑ, тӑшманпа хула тулашӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, КОНОВКА, ПЕРКОВЦЫ, ЛИВИНЦЫ, МИХАЙЛОВКА, ТОЛБУРЯНЫ, БАЛКОВЦЫ, ЛАРГА, БЕЛЯВИНЦЫ, ШИРОВЦЫ, ПЕРЕРИТА ялӗсене туртса илнӗ.

БЕЛЬЦЫ хулинчен кантӑртарахра тата хӗвеланаҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, Молдаван ССР-ӗнчи КИШКАРЕНИ, СЫНДЖЕРЕЙ, КОТЮЖАНЫ район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата ытти 30 яла ытла йышӑннӑ.

ПЕРВОМАЙСК хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланаҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Одесса облаҫӗнчи район центрӗсене — ВАЛТА хулине тата КРИВОЕ ОЗЕРО, БОЛЬШАЯ ВРАДИЕВКА ялӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра —ЛЮБОМИРКА, 1-МӖШ ПОСИЦЕЛЫ, 2-МӖШ ПОСИЦЕЛЫ, ЖЕРЕБКОВО, МИХАЙЛОВКА, ГВОЗДАВКА, ИВАНОВКА, СЫРОВО, АДАМОВКА, МАРИНОВКА ятлӑ пысӑк ялсем тата КИРИЛЛОВКА, БОЛЬШАЯ ВРАДИЕВКА, СЫРОВО, ЗАПЛАЗЫ, ЧИХАЧЕВО, ЖЕРЕБКОВО, ПЕРЕЛЕТ, БАЛТА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ВОЗНЕСЕНСК хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступление ӑнӑҫлӑ вӑйлатса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ЦАРЕДАРОВКА, КОПАНИ, НОВОСЕЛОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, ЛИДИЕВКА, МОЛДАВКА, СТАРАЯ КАНТАКУЗЕНКА, ДМИТРИЕВКА, НОВОЕ ВОСКРЕСЕНСКОЕ, ПОКРОВСКОЕ, КАТЕРИНЕНТАЛЬ, КАРЛСРУЕ, КОВАЛЕВКА, ТЕРНОВАТАЯ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЯСТРЕБИНОВКА, МОЛДАВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 28-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 35 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 38 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Днестр шывӗн леш енче пирӗн танкистсемпе пехотинецсем, ҫав тери хӑвӑрт малалла куҫса пырса, пӗр чарӑнса тӑмасӑр Коломыя хулине вӗркӑнса кӗнӗ. Кулара сасартӑк совет ҫарӗсем курӑнса кайни гитлеровецсене чӗтрене ӳкернӗ. Совет боецӗсем нимӗҫсен гарнизонне аркатса тӑкнӑ та чугун ҫулсемпе пӗрлешсе ҫулӗсен пысӑк узелне—Коломыя хулине туртса илнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем нумай.

Пирӗн ҫарсем Сангура район центрне туртса илнӗ хыҫҫӑн Прут шывӗн ҫулахай тӑрӑхне тухнӑ та Черновицы хулине ҫурҫӗр енчен касса кӗмелли кӗперпӗн ҫапӑҫма тытӑннӑ. Пӗр чӑсри боецсем паян ҫав кӗпер урлӑ штурмласа каҫса кайнӑ та тӑшманпа Черновицы хулин ҫурҫӗр енчи хӗррипе ҫапӑҫма тытӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн танковӑй ҫарсемпе мотопехота Черновицы хулинчен хӗвеланӑҫнерехре Прут шывӗ урлӑ иксе каҫнӑ та тӑшманпа хулан хӗвеланӑҫ тулашӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ. Ҫак ҫапӑҫусенче тӑшмана сыпсем тӗлӗшпе пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ.

Ярмолинцыран кӑнтӑртарахра гвардейски стрелковӑй соединени, танкистсемпе пӗрле ҫапӑҫса, виҫӗ кун хушшинче 2.000 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, нимӗҫсен темиҫе вунӑ танкне тата 1.500 автомашинине ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшмантан танксем, тупӑсем, трактор-тягачсем, бронетранспортерсем тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗн склачӗсене тытса илнӗ.

Днестр шывӗн сулахай хӗррипе хӗвеланӑҫнелле куҫса пыракан совет чӑҫӗсем Каменец-Подольск облаҫӗнчи Старая Ушица район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата ытти ялсене те чылай йышӑннӑ. Кун каҫиччен 800 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 8 танк, 37 тупӑ, 86 миномет, 200 пулемет ытла тата 1 боеприпас склачӗ тытса илнӗ.

* * *

Бельцы хулинчен кӑнтӑртарахра тата хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр участокра тӑшман хӑйӗн пехотин пысӑк вӑйӗсене контратакӑна кӗртсе янӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсене сывӑхах янӑ та тӗрлӗ хӗҫпӑшалпа вӑйлӑ пеме тытӑннӑ. Нимӗҫсем васкасах каялла чакнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен темиҫе ҫӗр вилли тата аманнисем выртса юлнӑ. Тепӗр участокра пирӗн наступлени туса пыракан чӑҫсем кӗске ҫапӑҫура румынсен кавалери полкне аркатса тӑкнӑ. Пӗр соединени боецӗсем ҫак юлашки кунсенче 28 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 6 тупӑ, 60 хир тупи, 400 автомашина, артиллерипе апат-ҫимӗҫсен 14 складне тытса илнӗ. 1.500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Первомайск хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланаҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса ӑнӑҫлӑн малалла талпӑнса пынӑ. Темиҫе кун ҫитет ӗнтӗ, совет чӑҫӗсем, ҫавӑрса илмелли маневр туса, Одесса облаҫӗнчи район центрне—Балта хулине ҫавӑрса илнӗ. Тӑшман гарнизонӗ эсэсовецсен «Виле пуҫ» ятлӑ танковӑй дивизийӗн подразделенийӗсенчен, 11-мӗш танковӑй дивизирен тата унтер-офицерсен шкулӗнчи курсантсенчен тӑнӑ. Ҫав йышлӑ гарнизон хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Анчах та штурм туса иртнерхи хыҫҫӑн тата урамсенчи хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн совет боецӗсем паян нимӗҫсен гарнизонне аркатса тӑкнӑ, Балта хулине туртса илнӗ. Нимӗҫсен уйрӑм пӗчӗк ушкӑнӗсем ҫеҫ ҫырма-ҫатрасем урлӑ тарса хӑтӑлма пултарнӑ, вӗсем хӑйсен пӗтӗм ҫар техникине пӑрахса хӑварнӑ. Темиҫе ҫӗр сынна тыткӑна илнӗ, вӗсен шутӗнче эсэсовецсем нумай. Балта хули урамӗсенче тӑшманӑн 2.000 виллине ытла шутласа кӑларнӑ.

* * *

Ленинград фрончӗн авиацийӗ тӑшманӑн аякри тылӗнче вырнаҫса тӑракан нимӗҫсен пысӑк аэродромне тапӑннӑ. Бомбардировщиксен пӗр ушкӑнне Совет Союзӗн Геройӗ гварди майорӗ Стольников летчикпа гварди майорӗ Козельков штурман ертсе пынӑ, тепӗр ушкӑнне гварди майорӗ Гузов летчикпа гварди капитанӗ Вловкченко штурман ертсе пынӑ. Ҫанталӑк начар тӑнӑ пулин те, совет самолечӗсем пурте кӑтартнӑ ҫулпа пырса тӗп тӗрӗс ҫав аэродром ҫине пырса тухнӑ, вара вӗсем хӑйсен мӗнпур бомбисене аэродром ҫине тӑкма пуҫланӑ. Вӑл вӑхӑтра аэродром ҫинче тӑшманӑн 60 самолета яхӑн тӑнӑ. Ҫавсенчен 22 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Аэродром тӗлӗнче сывлӑшра пулса иртнӗ ҫапӑҫура пирӗн истребительсем тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Мартӑн 28-мӗшӗнче тул ҫутӑлса килнӗ чухне Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика Флотӗн

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

М. И. Калинин юлташа Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗн ятне парасси ҫинчен

Совет Государствине тӑвас тата ӑна ҫирӗплетес ӗҫре ҫав тери паха ӗҫсем тунӑшӑн Михаил Иванович Калинин юлташа, вӑл Совет влаҫӗн Верховный органӗн руководителӗ пулса ӗҫлеме тытӑнни 25 ҫул тултарнӑ май, Ленин орденӗ тата «Серп и молот» ылттӑн медаль парса, Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗн ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗн Заместителӗ
Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН

Мускав, Кремль.
1944 ҫулхи мартӑн 29-мӗшӗ

Шанчӑклӑ ленинеца тата Совет Государствин Верховный органӗн руководительне Михаил Иванович Калинина

Хаклӑ Михаил Иванович!

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ тата ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Сире Эсир Совет Государствин Верховный органӗн руководителӗ пулса ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлени 25 ҫул тултарнӑ ятпа хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Чӗрӗк ӗмӗр каялла, Владимир Ильич Ленин сӗннипе, совет халӑхӗн ирӗкӗпе, Сире Совет республикине ертсе пыма лартрӗҫ. Ҫав ӗҫре Эсир Ленин—Сталин партийӗн ӗҫӗсене шанчӑклӑн пурнӑҫа кӗртсе пыраканӗ пулса тӑтӑр. Хӑвӑрӑн пӗтӗм ӗҫӗрте Эсир пирӗн ҫӗршыври рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзне тата Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетсе пытӑр. Эсир Совет Государствин Верховный органӗн руководителӗ пулса ӗҫлеме тытӑнни 25 ҫул тултарни Хӗрлӗ Ҫар фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешсе аслӑ ҫӗнтерӳсем тунӑ историллӗ кунсемпе пӗр вӑхӑтра пулчӗ. Вӑл ҫӗнтерӳсем пирӗн совет стройӗн вӑйне тата никам ҫӗнтерейми хӑватне уҫӑмлӑн кӑтартса параҫҫӗ. Совет стройне ҫирӗплетессишӗн Эсир чӗрӗк ӗмӗр хушши вӑя шеллемесӗр ӗҫлерӗр. Эсир Совет Государствин Верховный органӗн руководителӗ пулса 25 ҫул хушши пӗр улшӑнмасӑр ӗҫлени совет обществин стройӗн вӑйне тата ҫирӗплӗхне кӑтартса парать.

Ленин — Сталин партине чеерен парӑнса ӗҫленӗшӗн, ӗҫҫынисен анлӑ массисемпе таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑшӑн ӑшӑ тауҫӑ кӑмӑллӑ пулнӑшӑн, хӑвӑрӑн пурнӑҫри пуян опытсемшӗн тата большевикла ӑслӑ пулнӑшӑн Сире мӗнпур халӑхсем ҫав тери хисеплесе чунтан-чӗререн юратаҫҫӗ. Сирӗн ятӑр Тӑван ҫӗршыв интересӗсемшӗн, ӑна пуянлатса чечеклентерес пысӑк ӗҫре вӑя шеллемесӗр, чунтан парӑнса ӗҫленине кӑтартса тӑракан паллӑ пулса тӑчӗ.

Сире, хаклӑ Михаил Иванович, Тӑван ҫӗршыври халӑхсен ырлӑхӗшӗн нумай ҫулсем хушши тухӑҫлӑн ӗҫлеме пӗтӗм чӗререн вӑй-халпа сывлӑх сунатпӑр.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ.
СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович Калинин юлташа

Хаклӑ Михаил Иванович!

Сире Советсен Пӗтӗм Россиӑри Центральный Исполнительный Комитечӗн Председателӗ пулма суйлани 25 ҫул тултарнӑ кун Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗн Президиумӗ Сире хӗрӳллӗ салам ярать.

Ҫирӗм пилӗк ҫул хушшинче Эсир Россия Федерацийӗн тата Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный органӗсен руководителӗн пысӑк та ответлӑ ӗҫӗсене чыслӑн та хисеплӗн туса тӑтӑр. Ленинпа Сталинӑн сывӑх тусӗ пулса, Эсир Совет Государствин чи пысӑк организаторӗсемпе строителӗсенчен пӗри пулса тӑратӑр. Сирӗн мӗнпур ӗҫӗрсем рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин союзне, Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетес тӗлӗшпе пулса пычӗҫ. Эсир ленинла-сталинла теорин принципӗсене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пынӑшӑн, рабочисемпе хресченсен анлӑ массисемпе яланах таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑшӑн тата вӗсен нушисене тӗрӗс пӗлсе тӑнӑшӑн Сире Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсем хисеплесе хӗрӳллӗн юратаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсем пирӗн ҫӗршыври рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци Отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче, Совет Государстви тата Совет Союзӗнчи халӑхсем йывӑр тӗрӗслӳсем тӳссе иртнӗ тапхӑрта, Эсир аслӑ канашсем паракан ҫын пулса тӑнине курасҫӗ, Сирӗн сӑмахӑрсенче хамӑр ҫӗнтерес шанчӑка тупаҫҫӗ.

Халӗ, аслӑ Сталинӑн генилле стратегийӗ хавхалантарса ертсе пыракан ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар Совет Союзӗнчи халӑхсен хаяр тӑшманӗн кӗтӗвӗсене хӑватлӑн пыра-пыра ҫапнӑ чухне тата фашистла захватчиксене пӗтемпех ҫӗнтерсе тӑкас сехете ҫывхартса пынӑ чухне, СССР Верховный Совет Президиумӗ Эсир тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫре питӗ нумай пулӑшнине тулли кӑмӑлпа палӑртать.

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Сирӗн пурнӑҫри пысӑк опыт тата государство ӗҫӗнчи пуян практика хамӑрӑн Совет Государствин хӑватне малалла аталантарса пынӑ ҫӗрте питӗ пысӑк пулӑшу парасси ҫине шанса тӑрать.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совечӗн Президиумӗ Сире, хаклӑ Михаил Иванович, хамӑрӑн аслӑ Совет Союзӗшӗн, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыври халӑхсен ырлӑхӗшӗн нумай ҫулсем хушши тухӑҫлӑн ӗҫлеме сывлӑхпа вӑй-хал сунать.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович Калинина

Хаклӑ Михаил Иванович!

Россия Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховный Совет Президиумӗ Сире Пӗтӗм Российӑн Центральный Исполнительный Комитечӗн Председателӗ пулма суйлани 25 ҫул тултарнӑ кун чӗререн хӗрӳллӗ салам ярать.

Эсир Пӗтӗм Российӑн Центральный Исполнительный Комитечӗн Председателӗ, ССР Союзӗн Центральный Исполнительный Комитечӗн Председателӗ тата СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ пулса, чӗрӗк ӗмӗр хушши Совет Государствин Верховный органӗн ответлӑран та ответлӑ руководителӗ пулса, ывӑнма пӗлмесӗр, тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлетӗр.

Сирӗн пӗтӗм ӗҫӗр Ленин—Сталин партийӗн ӗҫӗшӗн, рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзне ҫирӗплетес ӗҫшӗн, Совет Союзӗнчи халӑхсен никам ҫӗмӗрейми туслӑхӗшӗн кӗрешнӗ ҫӗрте паха пример пулса тӑрать.

Ҫак чаплӑ юбилее хамӑрӑн ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар аслӑ Сталин ертсе пынипе фашистла захватчиксене аркатса пынӑ тата вӗсене хамӑрӑн таса совет ҫӗршывӗнчен хӑваласа кӑларнӑ вӑхӑтра паллӑ тӑватпӑр.

Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсем пирӗн Совет Государствин никам аркатайми ҫирӗплӗхне кӑтартса параҫҫӗ. Вӑл государствӑна тӑвассишӗн Эсир нумай ҫулсем хушши ӗҫлерӗр.

РСФСР Верховный Совет Президиумӗ Сире, хаклӑ Михаил Иванович, хӑвӑрӑн сывлӑхӑрпа вӑй-халӑра хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывшӑн тата аслӑ совет халӑхӗшӗн кӗрешме нумай ҫулсем хушши сыхласа усрама чӗререн ырӑ сунать.

Россия Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховный Совечӗн Президиумӗ.

Молдаван ССР-ӗн партизанӗсемпе партизанкисене орденсемпе тата медальсемпе наградӑлани

Партизансем фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ чухне паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх ҫаксене наградӑланӑ:

Ленин орденӗпе—Б. А. Андреева, Е. А. Огарченкӑна;

Хӗрлӗ Ялав орденӗпе—В. Е. Ананьева, В. З. Бужка, А. Ф. Никитенкӑна, А. П. Прыткова, И. И. Рыжова, Д. А. Фадеева, Я. П. Шкрябача, А. Г. Холменкие;

1-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе—7 сынна;

II-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗпе—8 сынна;

Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе—35 сынна;

«Хастарлӑхшӑн» медальпе—16 сынна;

«Ҫапӑҫусенче палӑркӑшӑн» медальпе 18 сынна наградӑланӑ (ТАСС)

Колхоза пӗр тонна утӑ

КУВАКИНО. Киров ячӗпе тӑракан колхозри тимӗрҫӗ Степан Максимович Ванюхин, хӑйсен колхозӗн выльӑх апачӗ ҫитменнине шута илсе, ӑна пӗр тонна утӑ кивҫен панӑ.

Суворов ячӗпе тӑракан колхозӑн членӗсем, Комсомольски районри «Трактор» колхоз членӗсен пуҫарӑвне йышӑнса, хӑйсен колхозне 15 центнер вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми панӑ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

самолечĕсем Нарва заливĕнче нимĕçсен карапĕсен темиçе ушкăнне асăрханă. Пирĕн пикировка тăвакан бомбардировщиксемпе штурмовиксем хунекаçитченех тăшманăн çар суднисене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе хуралта çӳрекен икĕ карап, 3 тральщик тата хуралта çӳрекен 2 катер шыва путнă.

* * *

Мартăн 15-мĕшĕнче Украинăри партизансен отрячĕ Каменец-Подольск облаçĕнчи пĕр ялта вырнаçса тăнă тăшман гарнизонне хăюллăн тапăннă. Партизансем нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çитиех пĕтерсе тăкнă. Украинăри партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн каялла чакакан чаçĕсемпе тата обозĕсемпе çапăçма пуçланă, 200 гитлеровеца çитиех вĕлерсе пĕтернĕ, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 230 лава тытса илнĕ. 90 нимĕçе тыткăна илнĕ. Совет патриочĕсем нимĕçсем Германие каторгине хăваласа пыракан 5.000 мирлĕ çынна ирĕке кăларнă.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çĕнĕ вăй-хăват кӳреççĕ

ВĂРМАР, мартăн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Партин 15-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз правленийĕн çуртне халăх тулнă. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар Совет государствин чиккине тухнă ятпа Сталин юлташ пачă приказа итлеççĕ. Колхоз председателĕ В. Ефимов юлташ приказа уçăмлăн та ăнланмалла вуласа парать.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе савăнаççĕ. Приказпа паллашнă хыççăн вĕсем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çине ĕçпе ответлес тесе, çуракине лайăх ирттерме, гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илме обязательство илчĕç.

Колхозăн кăçал 3.956 гектар сурхи культурăсем акмалла. 49 гектар çĕрулми лартмалла. Ку таранччен пур тĕрлĕ культурăсен вăрлăхĕсене те тасатса, акма юрăхлă туса хунă. Ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса хатĕрленĕ. Колхозра 60 лаша пур, вĕсем мăнтăр. Лашасене лайăх апат çине тăратнă. Юлашки вăхăтра кăна 7 вăкăра кӳлме вĕрентнĕ. Çураки вăхăтĕнче кам мĕнле ĕç тумаллине палăртса хунă, лашасене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетнĕ.

Колхозра 6 бригада. Вĕсем кашниех пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозниксене агротехникăна вĕрентме кружок организациленĕ. Унта 51 колхозник çӳрет. Колхозниксем хăйсем кружока çӳресе тунă пĕлӳсемпе кулленхи ĕçре усă тураççĕ. Колхоз агротехникăллă мероприятисене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Вăйлă тырпул—çĕнтерӳ шанчăкĕ

СОВЕТСКОЕ. Чăваш республикине Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕпе иккĕмĕш премие памалла туни çинчен пĕлсенех, «Сеятель» колхозăн председателĕ Николай Андреев колхозниксен аслă пухăвне пуçтарчĕ. Колхозниксем çак хыпара пысăк хавасланăхпа кĕтсе илчĕç.

— Тăван республикăна çавăн пек чыслани пире татах та çĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантарать. Пирĕн кăçал татах лайăхрах ĕçлемелле,—терĕ колхоз председателĕ.

Унăн сăмахĕсемпе колхозниксен кăмăлĕсем пĕрлешрĕç. Вĕсен тухăçлă тырпул туса илмелли çирĕп шанчăк пур. Вăл —агротехникăллă пуян опыт, çулсерен гектар çинчен 100 пăтран кая мар тырпул туса илни.

Чăнах та çак колхозăн çыннисем вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта кашни гектартан çĕр пăт тырă ӳстерчĕç. Кашни ĕçкунĕ пуçне 2,2 килограмшар тырă валеçрĕç, государствăна пиншер пăт парчĕç. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçланă. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсене пăхса тухса, ВКП(б) Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕ «Сеятель» колхоз лайăх ĕçленине палăртнă.

Колхозра çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслерĕç. Акана пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсем пур культурăсемпе те ытлашшипех çителĕклĕ тата вĕсене сортланă. 150 центнер çĕрулмине яровизацилеме хунă. Ялхуçалăх машинисене, пăявсенчен пуçласа селялка таранах, пурне те юсаса çитернĕ. Колхоз лашисем пурте самăр тата 4 вăкăра кӳлме вĕрентнĕ.

Уя 2500 лав тислĕк кăларчĕç тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе кĕл чылай пухнă. Колхозăн çуракине ирттермелли çирĕп ĕç планĕ пур.

Кивуйри «1-ое мая» колхоз уя тислĕк кăлармалли, кĕл, чăх-чĕп тислĕкĕ пухмалли плансене ытлашшипех пурнăçланă, пĕр тонна ытла фекали пухнă. Вăрлăхсене кирлĕ чухлех хатĕрлесе çитернĕ. Лашасемпе машинăсем çураки валли йĕркеллĕ те хатĕр. Колхозра агротехникăна вĕренессине организациленĕ.

Суркунне çывхарать. Ăна «Сеятель» тата «1-ое мая» колхоз членĕсем пур енчен те хатĕр пулнипе кĕтсе илеççĕ.

Яков СИГАЙ.

Çуракине хатĕр

ЧУРАЧĂК. (Хамăр корр.). Штыкассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăх пуçланнăранпа хире 1.920 лав тислĕк кăларчĕ, 35 центнер кĕл, 42 центнер фекали, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕ. Çĕнĕрен 6 сӳре, 47 хăмăт, 19 ĕнерчĕк, 200 ытла ака пăявĕсем тунă, 126 михĕ çĕленĕ.

Çак кунсенче колхозра çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслӳре колхоз çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитни курăнчĕ. Ялхуçалăх машинисем юсанă, [illegible]

[illegible] пачах та çук. [illegible] хатĕрленĕ.

Çуракине [illegible] колхозниксене [illegible] çирĕплетсе хунă. [illegible] çуракине 7 кунта туса ирттерме [illegible].

Хĕле кĕнĕренпе уя 1.800 лав тислĕк кăларса, уйрăм купа туса хунă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах М. Краснова юлташ тăрăшса ĕçлерĕ. Колхозри çамрăксемпе комсомолецсем 60 центнер кĕл, 23 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. Çамрăксем вырăнти удобренисем пухассипе кашни вырсарникун воскресник ирттерчĕç.

Ялхуçалăх машинисенчен 25 плуг, 25 сӳре, 2 селялка юсанă.

Колхозри комсомолецсем 4 вăкăра кӳлме вĕрентрĕç, уйрăмах П. Ярутконапа М. Краснова [illegible].

Ялсоветри «Тинĕр çырма» колхоз та çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. [illegible] уя 1000 лав тислĕк кăларнă, 26 центнер кĕл, 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

[illegible] лашасем валли 23 комплект [illegible] хатĕрлесе [illegible].

Колхозăн вăрлăх [illegible] тасатса хунă. [illegible] ялсоветĕ çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Ялсовет председателĕ комсомолка Мария Николаева колхозсене [illegible]. Вăл кашни кун колхоз председателĕсемпе, бригадирсемпе [illegible] ирттерет, вĕсене ĕçре пулăшса пырать.

— Эпир çак çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр, татах та лайăхрах ĕçлетпĕр, — тет Николаева юлташ.

ИШЛЕРИ. Мăнап ялсоветне кĕрекен колхозсем [illegible] çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ М. Шорнов юлташ) иртнĕ çулсенче [illegible] ĕçлерĕ. Кăçал колхоз çуракине питĕ аван хатĕрленнĕ.

А. ПАВЛОВ.

Ĕçри хастарлăх ӳсрĕ

ЕЛЧĔК. (Телефонпа). Пирĕн республикăн Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕ [illegible] МТС-ри [illegible] Правительство [illegible] колхозниксене çĕнтерӳсем тума обязательство илнĕ.

МТС-ри [illegible] трактор бригадисен бригадирĕсем Струльонова Марков юлташсем кăçал хăйсен бригадисене [illegible] 600-шер гектар [illegible] çинчи ĕçе тума обязательство илчĕç. Тракторист Волков [illegible] 900 гектар [illegible]

МТС-ĕн коллективĕ çураки планне 150 процент [illegible]

И. ПЕТРОВ.

Лашасене юрата пăхать

КАЛИНИНО. Шнакассинчи «Броневик» колхозри [illegible] лашасене юрата пăхать. М. Иванова юлташ [illegible] Вăл вĕсене [illegible] çитерет, шăварать тата тасатать. [illegible]

Ф. НИКИФОРОВ.

Югослави халăхĕсем гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешеççĕ

Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсем Югославие тытса илнĕ хыççăнах унти халăхсем хаяррăн хирĕç тăнине тĕл пулчĕç. Малтанах гитлеровецсене хирĕç çарăн уйрăм ушкăнĕсем, партизансен отрячĕсем кĕрешнĕ. Гитлеровецсене хирĕç кĕрешекенсен речĕ ӳсĕçсемĕн ӳссе пынă, отрядсем, батальонсем, бригадăсем, дивизисем пулса тăнă. 1942 çулăн вĕççинче Югослави территорийĕ çинче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар пулса тăнă. Хальхи вăхăтра халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар ретĕнче, партизансемпе пĕрле шутласан, 250.000 çын тăрать. Унта оккупантсемпе вĕсене пулăшса тăракансене хирĕç пыракан кĕрешӳре пиçĕхнĕ, вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен командирсем пур.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн уйрăмлăхĕ—вăл нумай тĕрлĕ халăхсенчен тата халăхăн нумай йышши сийĕнчен тухнă çынсенчен тăнине пулать. Нимĕç пусмăрçисене хирĕç сербсем, хорватсем, словенецсем, македонецсемпе черногорецсем, рабочисемпе хресченсем, ремесленниксем, суту-илӳ тăвакансем, интеллигентсем алла-аллăн тăрса кĕрешеççĕ.

Вăрçă пынă вăхăтра кĕрешекен Югославин вăйĕсем нимĕçсенчен тытса илнĕ районсенчи халăхсен шучĕпе ӳссе пыраççĕ. Гитлеровецсене хирĕç кĕрешекенсен ретне гитлеровецсем ирĕксĕр мобилизациленĕ, анчах вĕсем патĕнчен тарса тухнă патриотсем хутшăнаççĕ. Çапла юлашки вăхăтра кăна халăх çарĕн ретне 80.000 хорват куçнă.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар фашистсене пысăк çухатусем тӳстернĕ ĕнтĕ. 1943 çулта Югославире тăшманăн 36 дивизийĕ пулнă. Вăл хисепрен çурри итальянецсенчен тăнă. Итали параннă хыççăн унăн пĕр дивизийĕ тата темиçе подразделенийĕ халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар çумне пĕрлешнĕ, ытти 11 дивизие хĕçпăшалсăрлатнă пулнă.

Нимĕçсен Югославире сахал мар вăй тытса тăма лекнĕ. Итальянецсен вырăнне йышăнма Греции, Албанири тата Австрири çарсене куçарса пымалла пулнă. 1943 çулхи çулла, Сицили утравĕ çинче Германин икĕ дивизийĕ тăнă вăхăтра, Гитлер Югославин халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарне хирĕç çĕнĕрен 7 дивизи янă.

Югославири патриотсем, фашистсен кĕтĕвĕсене аркатса, вăйсăрлатса пырса, фашистла Германипе унăн тарçисене хирĕç кĕрешес ĕçре пĕрлешнĕ нацисене пысăк пулăшу параççĕ.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарпа пĕрлех, фашистсене хирĕç партизансен отрячĕсем те кĕрешеççĕ. Вĕсем Германие сăтăр кӳрес ĕçе анлăн сарса пыраççĕ. Иртнĕ вăхăтсенче Германин Балкан урлă çарсем турттарса каякан 217 поездне цĕтерсе тăкнă, Адриатика тинĕсĕ патне пыракан 5 чугун çул линине татнă. Загреб—Белград, Ниш—Скопле—Салоники тата ытти чугун çулсем çине те час-часах тапăнаççĕ. Партизансем кĕперсене арката-арката тăкаççĕ, Дунай шывĕ çинче Германин тулă тата нефть тиенĕ темиçе баржине путарнă. Какань районĕнчи çĕркăмрăк кăларакан шахтăсене тата металлурги завочĕсене сиенлес тĕлĕшпе те сахал мар ĕçсем тунă. Патриотсем хăйсен хăюллă ĕçĕпе вăрман промышленноçне ĕçлеме чăрмантараççĕ.

Кĕрешӳ анлăн сарăлса пынине пула, оккупантсем 1943 çулхи çуркунне тĕлне 20.000 çынна яхăн çухатнă. Гитлеровецсем хăйсене пăхăнман халăха пĕтерсе тăкма шутланă. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çара хирĕç нимĕç командованийĕ темиçе хутчен те походсем пуçарнă. Анчах та вĕсем пурте путланса ларнă. 1943 çулхи декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче Гитлер приказĕ тăрăх, нимĕçсен çĕнĕ, шут тăрăх 6-мĕш, наступленийĕ пуçланнă. Çавăн пирки халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн командующийĕ маршал Тито боецсемпе командирсене тата политработниксене чĕнсе приказ кăларнă. Çав приказра вăл тăшмана çĕмĕрсе тăкма пĕтĕм вăйсене пухмалли таткăлă тапхăр çитни çинчен каланă. Тито партизансене шоссепе чугун çулсене çĕмĕрме, çар объекчĕсене аркатма, тăшманăн транспорчĕсемпе çарĕсене куçса çӳремешкĕн чăрмантарма чĕннĕ. Вăл тăшман наступлени тума тытăнман çĕрте наступлени пуçарса яма хушнă. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн полякcемпе Югославири партизансен отрячĕсем, çав приказа пурнăçа кĕртсе пырса, гитлеровецсене пысăк сиен кӳнĕ. Нимĕçсем наступлени пуçарнă хыççăн малтанхи 20 кун хушшинче кăна 10.000 салтакпа офицера çухатнă. 1943 çулăн юлашки кварталĕнче фашистсен пĕтĕмпе 45.000 çын вилнĕ тата 13.000 çын аманнă. Фашистсене техника тĕлĕшĕнчен те пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар, тăшман тапăнса пынине тӳссе иртерсе, юлашкинчен партизансемпе пĕрле хăй наступлени тума пуçланă та çĕршыври нумай районсене ирĕке кăларнă. Ют çĕршыв хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи çул нумай хуласене оккупантсенчен ирĕке кăларнă.

Югославин пĕтĕм территорийĕн виççĕмĕш пайĕ халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар аллинче тăрать. Югослави халăхĕ тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе хăваласа кăларса яричченех кĕрешĕ. Çĕршыври ирĕклĕхе юратакан халăхсем хăйсем çĕнтересси çине шанса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен пурнăçне демократиллĕ майсемпе йĕркелеме тытăннă ĕнтĕ. Нумай пулмасть Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешес тĕлĕшпе фашистсене хирĕçле вечен Яйце хулинче пулса иртнĕ иккĕмĕш сессийĕ çĕршыва малалла аталантарса пырас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вечере пĕтĕм халăхсен тата обществăн пĕтĕм сийĕсен представителĕсем пулнă. Çĕршывра ирĕклĕ суйлавсем халиччен нихăçан та пулман-ха.

Сессире 142 делегат пулнă. Вĕсен вăрçă пула сесси ларăвне пыма пултарайманнисемшĕн те суйлама полномочисем пулнă. Вĕсем Серби, Хорвати, Словени, Македони, Черногори, Босни тата Герцеговина халăхĕсем пĕр тан правалла пулни çине тайăнса, ирĕклĕ те демократиллĕ Югославин конституцине туса хатĕрленĕ. Юголавири мĕнпур халăхсем çĕнĕ Конституцие пĕр çын пек пулса саламланă.

Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре çирĕплетнĕ туслăха вече президиумĕн составĕнче те лайăххăн курма пулать. Вече президиумĕн составĕнче сербсем, хорватсем, словенсем, черногорецсем, македонецсем тата ыттисем те пулнă. Фашизма хирĕçле вечен президиумĕ «ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета» суйласа хăварнă. Вăл вăрçă вăхăтĕнче правительство ĕçĕсене туса пырать. Çав комитетăн пуçĕнче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн тата партизансен отрячĕсен главнокомандующийĕ маршал Тито тăрать. Фашизма хирĕçле вечен президиумĕн председателĕ пулма Югославири паллă деятеле Иван Рибар доктора суйланă.

Югославири событисемпе ирĕклĕхе юратакан ытти çĕршывсенче те хытă интересленеççĕ. Пирĕн союзниксем Тито маршалăн штабĕпе çыхăнса ĕçлеме пуçларĕç. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тито маршала союзниксен Югославири çарĕсен командующийĕ пулма лартнă.

Югослави патриочĕсем Европăри ирĕклĕхе юратакан халăхсене, фашистсен пусмăрĕнче асап куракансене, тăван çĕршывшăн кĕрешмелли тĕслĕхсене кăтартса параççĕ. Вĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

Д. ВЛАХОВ.

Шкул ачисем фронта пулăшаççĕ

Шăхасан ватам шкулĕнчи комсомолецсемпе пионерсем тăван çĕршыва Хĕрлĕ Çара пĕрмаях пулăшаççĕ. 3-мĕш класра вĕренекенсем, класри руководительница Н. Смирнова юлташ ертсе пынипе, 2 центнер тимĕр-тăмăр пухнă. 8-мĕш класра вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли 150 мăшăр кĕпе-йĕм, 300 мăшăр кĕпе çухави, 250 штук тӳмме тата енчĕксемпе сăмса тутрисем чылай пухса панă. Донбасс облаçĕнчи тăлăх ачасене пулăшма 2.100 тенкĕ укçа пухнă. Уйрăмах 6-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче укçа нумай пухăннă. Кунта кашниех 40—50 тенкĕрен кая мар панă. Сăмахран, Г. Почтарев — 45 тенкĕ, Г. Мешков — 50 тенкĕ, А. Говоров — 50 тенкĕ тата ытти те панă.

Комсомолецсемпе пионерсем малашне те фронта пулăшас тĕлĕшпе пикенсе ĕçлĕç.

Ют çĕршывсенче

„Хĕрлĕ Çарăн калама çук чаплă наступленийĕн историне тĕнче нихăçан та манмĕ"

Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕн государство чиккине—Прут шывĕ çине тухнă пирки США-ра мĕн калаçаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио обозревателĕ Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕн государстви чиккине —Прут шывĕ çине тухни çинчен ĕнер çапла каласа пĕлтерчĕ: ку çĕнтерӳ çапсутă çутатса ячĕ, ун умĕнче ытти ĕçсем пурте тĕксĕмленсе тăраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн çак чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен Нью-Йоркри хаçатсем çав тери пысăк заголовоксемпе пичетлесе пĕлтерне.

Америка агентствисем, нумай уйăхсем хушшинче пĕр чарăнса тăмасăр наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çарăн çав тери пысăк çитĕнĕвĕсене мухтаса, статьясем çырса сарнă. Сан-Францискăри радио совет çарĕсем Прут шывĕ çине тухнă ятпа уйăрăм литературăпа музыка монтажне панă. Передачăра чи малтан Хĕрлĕ Çар юлашки 15 уйăх хушшинче туса пынă наступлени çинчен каланă. Хĕрлĕ Çарăн 15 уйăх хушшинчи чаплă ĕçĕсене палăртса, обзор тăвакан çапла калать: Хĕрлĕ Çар çак вăрçăн пысăкран та пысăк ĕçĕсенчен чи аслă ĕçне турĕ тет. Малалла вăл çапла калать: Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем тăшман оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене ирĕке тухассишĕн тăшманпа кĕрешме хавхалантарса, вĕсен шухăш-кăмăлĕсене çирĕплетсе пычĕç. Хĕрлĕ Çарăн çакăн пек калама çук чаплă наступленине тĕнче нихăçан та манмĕ, тет.

Юлашкинчен радио çакăн пек чĕнсе каланă: «Хĕрлĕ Çар наступлени туса пыни çинчен çĕнĕ хыпарсем пĕлтерессине асăрхасах тăрăр. Мĕн пĕлтернине ăнланса илме тăрăшăр, мĕншĕн тесен вĕсем ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн историйĕ çинчен калаççĕ».

Черчилль радиопа тухса калани

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Уинстон Черчилль мартăн 26-мĕшĕнче радиопа сăмах тухса каланă.

«Эпĕ шутпа, Англире, сире чĕнсе каламаллине çулталăка яхăн вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, — тенĕ вăл. — Иртнĕ тапхăрта ĕçсем ăнмасăр та пулман, ăнсăр та пулман. Анчах та ырă хыпарсем начар хыпарсенчен чылай ытларах пулчĕç. Пĕрлешӳллĕ нацисем хăйсем лартнă тĕллев патне пĕр чарăнмасăр, хăвăртрах та хăвăртрах çывхарса пычĕç. Тĕнчене ирĕке кăларакан державăсен çав тери йывăр та вăрăма кайнă похочĕ тапхăран-тапхăран вĕçленсе пырать. Пирĕн халь ак çапла калама шанчăк çеç мар, пысăк сăлтав та пур: хамăр пыракан çула эпир йĕркеллĕнех утса тухатпăр, пĕтĕм тĕнчене хăраса тăнă хăрушлăх (вăл пĕтĕм çута пĕтерсе хуртнă пулĕччĕ, пирĕн ачасене тата шулас ăрусене çĕр çуллăха та тĕттĕмре, чуралăхра хăварнă пулĕччĕ) сирĕлсе кайрĕ ĕнтĕ.

Асăрханса калаçман çын çеç эпир хăçан, мĕнле майпа тата мĕнле условисенче çĕнтерессии çинчен малтанах каласа хума пултарать. Эпир çĕнтеретпĕрех. Ку вăл паллă. Тата çакă та паллă: Пирĕн çĕршыври аслăшăсем тата ют çĕршывсенчи союзниксем пĕр тĕллеве пурнăçласа пынă, пĕрле çыхăнса кĕрешни тата пĕр ĕçе тума тăрăшни эпир çĕнтерес вăхăта çывхартĕ».

Малалла Черчилль çулталăк хушшинче вăрçă ĕçĕсем мĕнле пулса пынисем çинчен каланă: «Хĕвеланăçĕнчи икĕ союзник — Англипе США — гитлеризма хирĕç туса пыракан вăрçăра çĕр çинче, тинĕсре тата сывлăшра тунă питĕ чаплă та тĕлĕнмелле ĕçсене пĕрле илсе пăхсан,— тенĕ Черчилль, — эпир хавасланмалла, тав тумалла тата нихçанхинчен те лайăхрах кĕрешме тăрăшмалла.

Тинĕсре, тĕрĕсрех каласан, çĕр çинче тата тинĕсре пĕрле çыхăнтарса туса пыракан питех те пысăк операцисен йывăрлăхне пирĕн союзниксемпе Совет Союзĕнчи тусcем çителĕклĕ хак паман пулсан, ăна ăнланма шулă пулĕччĕ. Вĕсем — питĕ аслă тип çĕр çинче пурăнакан халăхсем. Тăшман Российăна таса çĕрне тапăнсан, вĕсем тăшмана тĕл пулса атакăлама тип çĕрпе пыраççĕ. Пирĕн задачăсем йывăр, вĕсем урăхларах. Анчах Англипе Америкăри халăхсем вырăс халăхĕ вăрçăра калама çук чаплă çĕнтерсе пынипе çав тери савăнаççĕ. Эпĕ вырăс халăхĕн питĕ чаплă ĕçĕсене пĕр хут çеç мар мухтанă. Паян та эпĕ çапла каласшăн: вырăс халăхĕн çарĕсем пĕр çул хушшинче 900 миля кайса Сталинградран Днестр патне çитни, Прут шывĕ патне çывăхарса пыни—Гитлер пĕтсе ларассин çав тери пысăк сăлтавĕ пулса тăрать.

Эпĕ сире юлашки хут сăмах калаланăран вара захватчиксене (гунсене) вĕсем хăйсем çаратса пĕтернĕ çĕр çинчен хăваласа кăларнă çеç мар, вырăссен хастарлăхне тата çар руководствине пула халь Германи çарĕн шухăш кăмăлĕсем те чылай начарланчĕç. Россия халăхĕсем телейлĕ пулчĕç: калама çук пысăк хăрушлăх килсе тухсан, вĕсен воинпа çулпуç — Маршал Сталин пулăнчĕ, унăн авторитечĕ темиçе миллион çынлă çарсене 2.000 миля тăршшĕ фронтра килĕшӳллĕн куçарса пыма тата çав ĕçе тĕрĕслесе тăма, çар руководствине пĕрлĕхлĕ те килĕштерсе ĕçлекен тума май пачĕ, çакă вăл Совет Российăшĕн те, мĕнпур союзниксемшĕн те питĕ паха ĕç пулса тăчĕ.

Венгрире тата Балканри вассалла çĕршывсенче ĕçсем союзниксемшĕн лайăхланса пыни çинчен каланă чухне эпĕ çакна юри кайран калама тесе хăвартăм: совет çарĕсем çĕнтерсе малалла куçса пыни çав асăннă çĕршывсенче Гитлер ĕçĕ путланса ларассин тĕп сăлтавĕ пулса тăчĕ».

Лăпкă океанра тата Бирмăра Японие хирĕç туса пыракан вăрçă çинчен Черчилль çапла каланă: «Çулталăк каялла сăмах тухса каланă чухне эпĕ сире Гитлер пĕтсе ларнă хыççăн Япони пĕтсе ларичченх нумай вăхăт иртме пултарни çинчен каланăччĕ. Эпĕ халь те Япони пĕтсе ларичченх пăртак вăхăт иртĕ тесе шутлатăп-ха, анчах та эпĕ халь çав вăхăт хам çулталăк каялла шутланă чухлех вăрăм пулмалла мар тесе шутлатăп. Çав вăхăт вăрăм пулĕ-и, кĕске пулĕ-и, эпир ăна пăхмасăрах, хамăрăн мĕнпур вăйсене пухса, хамăрăн Америкăри тăвансемпе пĕрле ĕçе вĕçне çитеричченех ĕçлĕпĕр.»

Çакăн хыççăн Черчилль Англири пурнăçăн ыйтăвĕсем çинчен тата вăрçă хыççăн ăна мĕнле йĕркелемелли çинчен нумай каланă. Черчилль çапла каланă: правительство парламента 4 çул хушшинче тумалли ĕçсен планне тăратĕ, çав планра ĕç, çутĕç, суртйĕр ыйтăвĕсем тата ытти ыйтусем те пулĕç, тенĕ.

Юлашкинчен Черчилль çапла каланă: «Пĕрлешӳллĕ Штатсен пирĕн çĕршыва килнĕ тата халь килекен питĕ чаплă çарĕсем тата пирĕн хамăрăн халиччен пулнă çарсенчен пуринчен те лайăхрах хатĕрленнĕ тата лайăхрах хĕçпăшалланнă çарсем хисеп енчен пĕр-пĕринне тан тăраççĕ, вĕсем пĕр-пĕринпе туслăн çыхăнна. Çарсен руководителĕсене тупса лартнă, вĕсене эпир пурте шанатпăр. Германин çиçĕмле хăвăрт туса пыракан вăрçинче эпир пĕччен тăрса юлнă вăхăтра эпир лăпкă та çирĕп пулни пире нумай пулăшрĕ. Эпир хамăр халăхран, парламентран, хаçат-журналсенчен, мĕнпур классенчен халĕ те çавăн пекех лăпкă та çирĕп тăма ыйтатпăр. Кунта эпĕ сире çакăн пирки асăрхаттарса хăварасшăн: тăшмана улталас шутпа, çавăн пекех тата тренировка тăвас шутпа, эпир суя тревогăсем, вĕрентӳсем тата генеральнăй репетицисем нумай тăвăпăр. Пире тата тăшман та урăхла майсемпе атакăлама пултарать. Англи çакна тӳссе ирттермелле. Вăл нихçан та иккĕленсе тăман, каялла чакман. Сигнал парсан, тăшмана хупăрласа тăракан мĕнпур халăхсем ăна тапăнĕç те этемлĕхе малалла аталанма чарма хăтланнă хаяртан хаяр тирание пĕтерсе лартĕç.»

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Анцио патĕнчи (Римран кăнтăртарахри) плацдарма тапăнса, тăшман виçĕ тĕлте пĕчĕк атакăсем пуçласа янă, американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем вĕсене виççĕшне те сирсе янă. 5-мĕш армин тĕп фронтĕнче тăшман француз чаçĕсем тăракан позицие атакăланă, француз чаçĕсем атакăна сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем кăна тытăçа-тытăçа илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене чылайĕшне атакăланă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс районĕнчи сывлăш-çар вăйĕсем 1.400 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: пур фронтсенче те патрульсем кăна çапăçнă. Союзниксен Монтекассино тăвĕн хĕвелтухăç патĕнче тăнă малти отрячĕсене каялла куçарнă. Хăшпĕр районсенче тăшмана артиллери вăйлă пенĕ. Анцио районĕнче тăшман пĕр пĕчĕк атака пуçласа янă, ку атакăна сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири тĕрлĕ районсенчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Боснире оккупаци çарĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ. Кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнмасăр çапăçаççĕ. Тăшманăн Тузлы енчен тапăнса пыракан колонни, темĕн чухлĕ хăтлансан та, Биельнере çапăсакан колоннипе пĕрлешме пултарайман. Юлашки кунсенче тăшманăнне 500 çын ытла вĕлернĕ, нумайĕшне амантнă.

Герцеговинăри Требине çывăхĕнче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем темиçе çĕр нимĕçпе Михайлович четникĕсене аркатса тăкнă. Тăшмана пысăк çухатусем кӳреççĕ. Каялла чакакан тăшман хăй çулĕ çинчи ялсене çунтарса ярать.

Болгарсен оккупаци çарĕсем Враньепе Кумановран ирĕке кăларнă территори çине хĕсĕнсе тухма хăтланнă. Анчах та вĕсене каялла ывăтса янă. Икĕ кун пынă çапăçусенче тăшман чаçĕсене çĕмĕрсе тăкнă, питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00071 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.